25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
НОЯБРЬ
25
ЮНКУН
274 (6209) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ĔÇРИ ДИСЦИПЛИНĂНА ÇИРĔПЛЕТСЕХ ПЫРАР

Юратнă çулпуç Сталин юлташ лартнă историллĕ задачăсене пурнăçлас тесе, тăван çĕршывăн миллионшар патриочĕсем кашни хăйĕн вырăнĕнче тимлĕн ĕçлеççĕ, тăван Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ, совет тылне мĕнпур вăйпа çирĕплетеççĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ Çара малалла пулăшса, тыла тĕреклетсе пымалли майсенчен пĕри вăл — кĕрешӳри тимлĕхпе пĕрлĕх, хуçалăхри типтерлĕхпе перекетлĕх, ĕçри дисциплинăпа йĕркелĕх пулса тăрать.

Революци генийĕ В. И. Ленин ĕç çыннисене яланах дисциплинăллă пулма вĕрентнĕ. Çакăн çинчен пире унăн ĕçне малалла туса пыраканĕ Сталин юлташ та тăтăшах астутарать. Кĕрешӳри çĕнтерĕве, ĕçри çитĕнĕвве пĕрлĕхпе дисциплинăсăр тума çук.

Хурçă пек çирĕп дисциплина фронтра çеç мар, тылра та кирлĕ. Тылри кашни работник хăйне хушнă ĕçсене фронтри пек тĕрĕс тата вăхăтра пурнăçлама тивĕçлĕ. Производство командирĕн приказĕ рабочисемшĕн закон пулса тăрать, вĕсен çав закона кирек хăçан та, мĕнле пулсан та пурнăçламалла.

Малта пыракан предприятисен коллективĕсем вăрçă вăхăтĕнчи пек тимлĕн ĕçлеççĕ, çĕршывпа фронтăн заданийĕсене срокчен тата лайăх пурнăçлаççĕ. Уйрăмах харпăрхăйне шеллемесĕр, вăхăта пĕлмесĕр ĕçленин примерне, çирĕп дисциплинăпа йĕркелĕхе стахановецсемпе ударниксем кăтартаççĕ. Куславкка комбинатĕнчи Климашевский токаре нумай пулмасть васкавлă задани панă. Хушнă ĕçе вăхăтра тумаллине Климашевский юлташ лайăх ăнланнă. Утмăл ултă сехет цехран тухмасăр ĕçлесе, хăйне панă ответлă задание вăл чыслăн пурнăçланă. Çавăн пекех Дружинин цехĕнчи столярсем Вареспа Микельсон юлташсем те виçшер талăк пĕр канмасăр ĕçлесе, смена мастерĕ хушнă ĕçе срокра тунă. Пирĕн рабочисем фронтри боец пек дисциплинăллă пулнине кăтартакан тĕслĕхсем нумай.

Вĕсем пурте çакăн çинчен калаççĕ: фабрикăсемпе заводсенчи тухăçлă ĕçĕн ăнăçлăхне рабочисем çирĕп дисциплинăллă пулни, производство командирĕсен оперативлă приказĕсемпе заданийĕсене срокра тата пĕр пăркаланмасăр пурнăçлани татса парать. Производствари хурçă пек дисциплина вăл — ĕç тухăçлăхне ӳстермелли, пахалăхне лайăхлатмалли, йышлăрах та лайăхрах продукци туса кăлармалли май.

Рабочисем типтерлĕрех те дисциплинăлăрах пулса тăнă, вăрçă ыйтнă пек ĕçлеме вĕреннĕ, хăйсен тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçне ăнланса илнĕ предприятисенче производство малалла хăвăрт кайса, график пурнăçа кĕрсе, план ытлашшипех тулса пырать. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура чылай предприятисем мала тухни, чи малтанах, вĕсен коллективĕсем дисциплинăллă пулнинчен, вăрçă вăхăтĕнчи пек хастарлă ĕçленинчен тата производствăн пур звенисенче те çирĕп йĕркелĕх тунинчен килет. Дисциплинăпа йĕркелĕх социализмлă ăмăртура мала тухма пулăшать.

Дисциплинăсăр пулни, сӳрĕккĕн тата типтерсĕр ĕçлени, çапкаланчăк, кахал пулни пирĕн производствăна питех те пысăк сиен кӳрет: государство планне тултарма чăрмантарать, продукци кăларассине чакарать, Хĕрлĕ Çара пулăшассине вăйсăрлатать. Çĕмĕрлери «Большевик» заводра производство командирĕсен приказĕсене рабочисем срокра тата кирлĕ пек пурнăçламанни, ĕçе кая юлса пыни, прогул туни час-часах пулать. Мартынов юлташ директор пулса ертсе пыракан комбинатри рабочисем ĕçрен хăйсен ирĕкĕпе тухса каяççĕ. Виççĕмĕш кварталта, сăмахран, темиçе çын ĕçрен пăрахса кайнă. «Большевик» заводри тата комбинатри рабочисен ĕç дисциплини çакăн пек начар пулин те, унти завкомсем çак ыйтăва юлашки вăхăтра пĕре те хускатман, хăйсен заседанийĕсенче лартса сӳтсе явман.

Çирĕп дисциплинăпа йĕркелĕхшĕн, типтерлĕхшĕн кĕрешесси — предприяти коллективĕн тивĕçĕ. Завод директорĕн, парти, профсоюз тата комсомол организацийĕсен ĕç дисциплинине вăхăтран вăхăта мар, тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла, ăна производствăн пур участокĕсемпе звенисенче те кунран-кун çирĕплетсе пырассишĕн кĕрешмелле.

Дисциплинăна пăснине, юхăнчăк, сапаланчăк пулнине мирлĕ вăхăтрах сивленĕ. Халĕ, вăрçă кунĕсенче, апла тунк государство умĕнче айăпа кĕни пулать. Правительствăн ĕç законĕсем пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине предприятисенче пĕрмаях тĕрĕслесе тăмалла, вăрçă вăхăтĕнчи çирĕп дисциплинăна пăсакансене йĕркене кĕртмелле.

«Йĕркеллĕ, дисциплинăллă çынсем, граждăнла тивĕçе витĕр туйса тăракан çынсем йышлăланнăçемĕн йышлăланса пыраççĕ» (Сталин).

Пирĕн задача кашни рабочипе работницăна, служащине çавăн пек çынсен ретне тăратасси пулать.

Вăрçă кунĕсенче промышленноçпа транспорта рабочисен çĕнĕ ушкăнĕ хутшăнчĕ. Çамрăк рабочисене ĕç çине тĕрĕс пăхма, дисциплинăллă пулма вĕрентес пулсан, вĕсен политикăллă ăнланăвне, çĕршыв умĕнчи ответлăхне ӳстермелле, вара çамрăк рабочи ĕçри йывăрлăхсене ăнăçлăн сирме, пуçарулă та тавçăрулă пулма, панă сăмаха çирĕп тытма, начальник приказĕсене срокра пурнăçлама хăнăхать.

Çавна тăвас тесен, предприятисенчи обществăллă организацисен производствăна çĕнĕрен пынă рабочисем хушшинчи политикăллă ĕçе кашни кун туса пырас пулать, коммунистсемпе комсомолецсен ĕçре примерлă тата дисциплинăллă пулас пулать.

Халĕ, отечественнăй вăрçăн йывăр кунĕсенче, промышленноçпа транспорт работникĕсем пурте пĕр кăмăллă пулса ĕçлени, перекетлĕхпе типтерлĕхшĕн кĕрешни, дисциплинăпа йĕркене çирĕп тытни нихăçанхинчен ытларах кирлĕ. Гитлерла захватчиксене тăван çĕршывран хăваласа кăларас тесе, совет халăхĕ хăйĕн мĕнпур вăйĕпе пултарулăхне хурса ĕçлет. Тăшмана çĕнтерес пулсан, питех те вăйлă кĕрешӳ, хурçă пек çирĕп дисциплина кирлĕ

Совет войскисен çĕнтерĕвĕ çине ĕçпе ответлеççĕ

Пирĕн войскăсем Сталинград районĕнче ăнăçлăн наступлени туса пыни çинчен Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернĕ хыпарсене Н-ски заводра ĕçлекен рабочисем, служащисем тата инженерла-техникла работниксем радио тăрăх илтнĕ, кун хыççăнах вара кашни цехрах кĕске митингсем туса ирттернĕ.

Сталинград патне пымалли вырăнсенче тăракан пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисене хăватлăн пырапыра çапса, паллă çĕнтерӳсем туни Н-ски заводри рабочисемпе работницăсене пысăк савăнăç кӳрет, Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать.

Заводри рабочисемпе служащисен шухăш-кăмăлне пĕтĕçтерсе, мастер Зоров юлташ Кинзбургский цехĕнчи митингра çапла каланă:

— Пирĕн войскăсем Сталинград районĕнче ăнăçлă наступлени туса пыни тата çавăн пекех Владикавказ районĕнче ирттернĕ операцисем,—тенĕ вăл,— Хĕрлĕ Çар кунран-кун вăйланса пыни çинчен калаççĕ. Тăван Хĕрлĕ Çар татах та тĕреклентсе пытăр тесен, пирĕн рабочисен мĕнпур вăйпа пултарулăха хурса ĕçлемелле, производствăра ку таринччен тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе çĕнĕ те пысăкрах çитĕнӳсем тумалла.

Заводри рабочисем, инженерла-техникла работниксем совет войскисен çĕнтерĕвĕсем çине ĕçри çĕнĕ çĕкленӳпе, продукци ытларах туса кăларнипе ответлеççĕ. Кинзбургский цехĕнчи рабочи Григорьев юлташ митинг хыççăнхи сменăра хăйĕн нормине 180 процент, слесарь Бондарь — 250 процент тултарнă. Стахановец Капульсевич юлташ ноябрĕн 23-мĕшĕнче нормăпа пăхнинчен виçĕ хут тухăçлăрах ĕçленĕ.

Тылри патриотсем фронтри воинсене хăйсен тухăçлă ĕçĕпе пулăшаççĕ.

Эпир совет çĕрне гитлерла ирсĕрсенчен тасатма пултаратпăр тата тасатма тивĕç те!

СССР Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ Октябрь уявĕ ячĕпе кăларнă приказра: эпир совет çĕрне гитлерла ирсĕрсенчен тасатма пултаратпăр тата тасатма тивĕç те, тесе калани пурнăçа кĕме тытăнчĕ. Пирĕн войскăсем нимĕçсене Владикавказ районĕнче аркатса тăкрĕç, халĕ темиçе кун хушши Сталинград районĕнче ăнăçлăн наступлени туса пыраççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, Шупашкар хулинчи предприятисемпе учрежденисенче нумай çынлă митингсем пулса иртеççĕ.

Енер тир-сăран комбинатĕнчи пур цехсенче те митингсем пулса иртнĕ. Совет Информаци Бюровĕн юлашки сехетри пĕлтерĕвĕсене рабочисем производствăри çĕнĕ çĕкленӳпе ответлеççĕ. Атă-пушмак çĕлекен цех коллективĕ юлашки виçĕ кун хушшинче, рабочисен хисепĕ 2,5 хут сахалтарах пулин те, производство планне ăнăçлăн пурнăçларĕ. Чувяксем çĕлекен цех коллективĕ производство планне кулленех 120—125 процент тултарать. Уйрăм рабочисем— фрезеровщик Кочкин плана 238 процент, пĕр вăхăтрах виçĕ тĕрлĕ ĕç тăвакан Афанасьева—315 процент, стахановка Токарева—277 процент, Аникин—275 процент, Чижовăпа Андреева—190—185 процент тултараççĕ.

Совет Информаци Бюровĕн юлашки пĕлтерĕвĕсене ответлесе, пир-авăр фабрикинчи пур цехсем те тенĕ пекех çĕнĕ обязательствăсем илнĕ

Юлашки сехетре

Пирен войскăсем малалла наступлени туса пыраççĕ

Ноябрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, наступлени туса пырса, çурçĕр-хĕвеланăç енче 10—20 километр малалла кайнă тата ЧЕРНЫШЕВСКАЯ хулине, ПЕРЕЛАЗОВСКИЙ хулине тата ПОГОДИНСКИЙ местечкине тытса илнĕ. Сталинградран кăнтăралларахра пирĕн войскăсем 15—20 километр малалла кайнă тата ТУНДУТОВО хулипе АКСАЙ хулине тытса илнĕ.

Ноябрĕн 23-мĕшĕнче каç пулнă тĕле тыткăна илнисен хисепĕ тата 11.000 çын ӳснĕ, тыткăна илнисен хисепĕ халĕ ĕнтĕ 24.000 çын шутланать.

Ноябрĕн 23-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле мĕнпурĕ çакăн чухлĕ трофейăсем тытса илнĕ: орудисем — 557, автомашинăсем — 2.826, чугунçул вагонĕсем — 1.200, пулеметсем — 2.625, юсавлă самолетсем — 32, юсавлă танксем — 35 тата алăра тытмалли хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ, вĕсене шута илеймен-ха.

Çакăн чухлĕ пĕтерсе тăкна: самолетсем — 70, танксем — 157, орудисем — 186.

Ноябрĕн 23-мĕшĕнче çапăçу хирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 12.000 çын вилсе выртса юлнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пыраççĕ

Ноябрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сталинград патĕнче наступление малалла вăйлатса пынă. Фронтăн çурçĕр-хĕвеланăç участокĕнче пирĕн войскăсем 40 километр малалла кайнă тата СУРОВИХИНО хулипе станцине йышăннă. Дон шывĕ йупленнĕ вырăнта пирĕн войскăсем 6—10 километр малалла кайса ЗИМОВСКИЙ, КАМЫШИНКА, БЛИЖНЯЯ ПЕРЕКОПКА, ТРЕХОСТРОВСКАЯ, СИРОТИНСКАЯ ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ. КЛЕТСКАЯРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕннисем противникăн кăшт маларах çавăрса илнĕ 3 дивизине, виçĕ генералпа тата вĕсен штабĕсемпе пĕрле тыткăна илнĕ. Сталинградран çурçĕртерехре наступлени тăвакан пирĕн войскăсем, Атăл хĕрринчи ТОМИЛИН, АКАТОВКА, ЛАТОШАНКА ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илсе, Сталинградăн çурçĕр пайне хӳтĕлекен войскăсемпе пĕрлешнĕ. Сталинградран кăнтăр енче пирĕн войскăсем 15—20 километр малалла кайнă та САДОВОЕ хулине тата халăх пурăнакан УМАНЦЕВО, ПЕРЕГРУЗНЫЙ пункчĕсене тытса илнĕ.

Ноябрĕн 24-мĕш кунĕ вĕçленнĕ тĕле тыткăна илнисен хисепĕ татах 12 пин çын чухлĕ ӳснĕ. Çапăçусем пынă вăхăтра пĕтĕмпе противникăн 36 пин салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Туллимар даннăйсем тăрăх, ноябрĕн 19-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинчи çапăçусем вăхăтĕнче пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: тĕрлĕ калибрлă орудисем—1.164, юсавлă тата юсавлă мар танксем—431, юсавлă тата юсавлă мар самолетсем—88, автомашинăсем—3.940, лашасем—5 пин ытла, снарядсем—3 миллион, 18 миллион патрон, алăпа тыткаламалли хĕçпăшалсем нумай, боеприпассен, тумтирсен тата продовольстви склачĕсене тытса илнĕ, складсене халĕ шута илеççĕ.

Ноябрĕн 24-мĕшĕнче çапăçу хирĕнче противникăн 15 пин ытла салтакĕпе офицерĕ вилсе юлнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сталинград хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата кăнтăралларахри вырăнсенче малтанхи еннеллех ăнăçлăн наступлени туса пынă.

Пирĕн войскăсем **Чернышевская** хулине, **Перелазовский** хулине, **Погодинский** местечкине **Тундутово** хулине тата **Аксай** хулине тытса илнĕ

* * *

Ноябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 12 танкĕпе бронемашинине тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашинине пĕтерсе тăкнă, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине виçĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград хулин заводсем вырнаçнă пайĕнче пирĕн войскăсем, активлăн çапăçса, майĕпен малалла куçса пынă. Кунҫа 1000 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 2 танкне çунтарса янă, 16 пулеметне тата винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ. Хулан кăнтăр енчи хĕрринче совет чаçĕсем, нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пăрахса, противникăн йышлă укреплениййĕсемпе опорнăй пункчĕсене тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер вилли выртса юлнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла куçса пынă. Противник Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене малалла куçса пыма чарас тесе, васкаса пĕр пехотнăй тата пĕр танковăй дивизи илсе пынă та вĕсене çапăçăва кĕртсе янă. Вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Пирĕн танкистсем противник вырнаçнă вырăна флангсенчен пырса кĕрсе кайса, унăн оборонине йĕркерен кăларнă. Танксем хыççăн пыракан совет пехоти вара атака тунă та гитлеровецсене каялла хăваласа янă. Тăшмана хăваласа пырса, пирĕн чаçсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр çав участокра кăна, туллимар даннăйсем тăрăх, тăшманăн 4.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 18 танк (вĕсенчен виççĕшĕ юсавлăскерсем), 29 оруди, 40 пулемет, боеприпассен 3 складне тата ытти тĕрлĕ трофейăсем тытса илнĕ.

Тепĕр участокра пирĕн войскăсем противникăн пирĕннисем çавăрса илнĕ вăйĕсене хирĕç çапăçаççĕ. Малтан палăртнă тăрăх, çав çапăçусенче 2.000 салтакпа офицера çити тыткăна илнĕ, 13 танк, 10 оруди, 70.000 патрон, 500 лаша ытла тытса илнĕ. Противникăн пĕр дивизийĕн командованине тыткăна илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăралларахра пирĕн войскăсем, ăнăçлăн малалла куçса пырса, противника халăх пурăнакан темиçе пунктран хăваласа кăларнă. Пирĕн Н-ски соединени наступлени туса пынă пĕр участокра кăна противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен 3.000 вилли ытла çапăçу хирĕнче выртса юлнă. Тыткăна илнисем пур тата 1000 ытла автомашинăпа ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем противникăн контратакине сирсе ярса, нимĕçсен пехотин 2 ротине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен пĕр танкне персе çĕмĕрнĕ, артиллерин пĕр батарейине тата минометсен икĕ батарейине пусарса лартнă. Тепĕр участокра пирĕн войскăсен тылне кĕрсе кайма хăтланнă тăшман автоматчикĕсен ротине сапаласа янă.

* * *

Туапсеерн çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пĕр участокра противник пĕр кун малтан совет войскисем тытса илнĕ высотана йышăнса илме хăтланнă. Пирĕн боецсем пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе гитлеровецсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Н-ски подразделени нимĕçсене атакăланă та темиçе дзотпа блиндажа тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 вилли ытла выртса юлнă.

* * *

Калинин фронтĕнче пирĕн разведка тăвакан отрядсем икĕ кун хушшинче 127 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Старши лейтенант Верохин ертсе пыракан боецсен группи нимĕçсен К. ялĕнчи гарнизонне сасартăк тапăннă та аркатса тăкнă. 35 гитлеровеца вĕлернĕ, 6 пулемет, винтовкăсем тата боеприпассем тытса илнĕ. Пирĕн уйрăм чаçсен снайперĕсем кунҫа 166 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Минск облаçĕнче кĕрешекен партизансен «Непобедимый» ятлă отрячĕ противникăн 3 поездне ӳпĕнтерсе янă, çав поездсенчен пĕри икĕ паровозлă пулнă. Пурĕ 4 паровоз тата 45 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Унсăр пуçне, партизансем чугунçула 4 километр тăршшĕ пăсса хунă, 5 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсен фашистла захватчикĕсене 128 çынна вĕлернĕ.

Ноябрĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Сталинград** хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата кăнтăралларахри вырăнсенче малтанхи еннеллех ăнăçлăн наступлени туса пынă.

* * *

Сталинград хулин заводсем вырнаçнă пайĕнче Н-ски часть 17 дзота нимĕçсенчен тасатнă тата 250 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. 2 оруди, 12 пулемет, 35 автомат, 120 винтовка тата боеприпассем тытса илнĕ. Бронебойщиксен подразделенийĕ нимĕçсен 3 танкне çунтарса янă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противник хирĕç тăнине сирсе ăнăçлăн малалла куçса пынă. Пирĕн чаçсем наступлени туса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем тăшманăн 9 танкне персе çĕмĕрнĕ, 7 танкне, боеприпассен складне, радиостанцине тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра нимĕçсен 13 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Юсавлă 5 танк, 22 пулемет тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур, вĕсене халь тĕрĕсрех шута илеççĕ. Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçĕ противник йышăннă халăх пурăнакан пĕр пункта çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Вăл çав тери сасартăк пырса тапăннă, гитлеровецсем çав пункта хӳтĕлес ĕçе организацилеме те ĕлкĕреймен. Пирĕн боецсем нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне çити, 70 автомашинине тата çав пункт патĕнчи аэродром çинче тăнă 25 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăралларахра пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски часть тăшманăн 850 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 35 оруди, 19 автомашина, 49 станковăй тата ручной пулемет тытса илнĕ. Противникăн 520 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Пирĕн танкистсем каялла чакакан гитлеровецсене хăваласа пырса, нимĕçсен 14 танкне, 28 автомашинине, 8 орудине пĕтерсе тăкнă тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре совет войскисем вырăнти çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем нимĕçсен 5 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата противникăн артиллери батарейине пусарса лартнă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Н-ски подразделени противникăн контратакине сирсе янă та, гитлеровецсене хăваласа пырса, тăшманăн тĕреклетнĕ позицийĕсене тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче пирĕн подразделенисем тăшманăн хирĕç тăмалли тепĕр узелне тытса илнĕ. Пĕр танк, 2 оруди, 5 пулемет тата 2 миномет тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 вилли таран выртса юлнă.

* * *

Минск облаçĕнче кĕрешекен отрядри партизансен ушкăнĕ противникан чĕрĕ вăйне фронт патнелле турттарса килекен поезда ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз тата салтаксем ларса пыракан 10 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Темиçе кун иртсен партизансем чугунçула сирпĕнтерсе янă. Чугунçулăн çав участокĕ тăрăх вара поездсем çӳреме чарăннă.

* * *

Румын салтакĕ С. Албу çумĕнче Бухареста хăйĕн тăванĕсем патне яма çырнă çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Яланах вилĕм хăрушлăхĕнче пурăнатăп. Темиçе кун ĕнтĕ апат та, табак та памаççĕ. Кунта шыв та тупма çук. Нумаях пулмасть вырăссем пире атакăларĕç, пирĕн татах салтаксемпе офицерсем нумай пĕтрĕç. Çаксем мана пĕтĕмпех йĕрĕнтерсе çитерчĕç, эпĕ урăх чăтса тăма пултараймастăп ĕнтĕ... Малашне те сапла пулса пырсан, эпĕ ухмаха еретĕп. Кунта полкăн çурри ытла пĕтрĕ ĕнтĕ. Сире тата тепĕр хут йăлăнатăп: мĕн тума пуррине пурне те тăвăр—мана Российăран çăлса кăларăр».

* * *

Хаяр террор Чехословаки халăхĕн нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешес кăмăлне çапса хуçайман. Чехословакирен унти транспортра тата промышленноçра саботажла ĕçсем нумай туни çинчен пĕлтереççĕ. Прагăран инçех мар вырăнта çак кунсенче нимĕçсен икĕ çар эшелонĕ пырса çапăннă. Брно районĕнче оккупантсен тумтирсем тата атă-пушмаксем хунă çар склачĕ сунса кайнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Хĕлле тумалли агротехника ĕçĕсен планĕ çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ колхозсенче 1942—43 çулхи хĕлле тумалли агротехника ĕçĕсен планне пăхса тухнă.

Совнарком хĕллехи вăхăтра тумалли агротехника ĕçĕсене вăйлатма хушнă. Совнарком çирĕплетнĕ план тăрăх, кăçал хĕллехи вăхăтра çакăн чухлĕ вырăнти удобрени хатĕрлесе хурса хире кăлармалла: тислĕк—1.500 пин тонна (çав шутран 1000 пин тоннине хире хĕлле кăлармалла), торф—500 пин тонна хатĕрлесе хире кăлармалла, кĕл 80 пин центнер, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ — 50 пин центнер пухмалла. Кăçал 150 пин гектар çинче юр тытса хăвармалла. 600.609 центнер вăрлăха сортласа хумалла, çав шутра 455 пин центнера триерпа сортламалла. Совнарком райсовет исполкомĕсене хĕлле тумалли агротехника ĕçĕсен планне колхозсене вунă кун хушшинче çитерме хушнă.

Вырăнти удобренисене пухас тата хире турттарса кăларас ĕçе лайăхрах организацилемешкĕн Совнарком райисполкомсене çакăн пек ĕçсем тума хушнă: кашни колхозрах хĕлле тислĕк турттармалли хирсемпе участоксене палăртса хумалла, тислĕк куписен вырăнĕсене шалчасем чиксе лартса паллă туса хумалла; вырăнти удобренисене пухас, сыхласа усрас тата хире турттарса кăларас тĕлĕшпе кашни уйхир бригадине, кашни выльăх-чĕрлĕх фермине конкретнăй заданисем памалла; тислĕке хире турттарма кирлĕ чухлĕ туртăм вăйĕ уйăрса хумалла, çак ĕçре пуринчен ытла măйракаллă шултăра выльăхпа усă курмалла, кашни колхозрах кĕле тата кайăк-кĕшĕк тислĕкне сыхласа усрамашкăн пĕр-пĕр хуралтăра вырăн уйăрса хумалла; тислĕк тата ытти тĕрлĕ удобренисем пухнăшăн, сыхласа усранăшăн тата хире кăларнăшăн хавхалантарас тĕлĕшпе палăртнă ĕçсене пурнăçа кĕртнипе кĕртменнине тĕрĕслесе тăмалла. Хăйсен тислĕкне колхоз хирне турттаракан колхозниксене выльăх айне сарма улăм, торф памалла, улăма тата тислĕке турттарма вĕсене транспорт памалла; хăйсен тислĕкне колхоз хирне турттаракан колхозниксене хăйсен выльăх-чĕрлĕхне колхозăн выльăх çӳретмелли вырăнĕсене яма ытларах ирĕк памалла.

Торф кăларса хире турттармалли плана пурнăçа кĕртмешкĕн Совнарком колхозниксенчен уйрăм бригадăсем тума хушнă; çав бригадăсене хăйсен планне тултарма кирлĕ таран транспорт уйăрса пама, вăл бригадăсене ĕç графикĕсемпе заданисем туса пама хушнă; колхозсенче вырăнти удобренисене пухас, тĕрĕс сыхласа усрас тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене пурнăçласа пынине тăтăшах контрольлесе пыма хушнă.

Совнарком хăшпĕр колхозсемпе райисполкомсем хирсенче юр тытса хăварас ĕçе çителĕклĕ хак паманнине кăтартса панă. Юр тытса хăварни вăл калчасене тата нумай çулхи курăксене шăнасран сыхласа хăварма тата нӳрлĕх пухма кирлĕ. Совнарком райсовет исполкомĕсене çакăн çинчен астутарса хăварнă: кăçалхи хĕллепе çуркуннехи климат условийĕсем калчасене хĕл каçма йывăртарах пулма пултараççĕ. Çавăнпа та колхозсенче юр тытса хăварма халех хатĕрленмелле: çĕнĕ щитсем тумалла, киввисене юсамалла, çапăсем хатĕрлесе хумалла, юр тытса хăвармалли участоксене палăртса хумалла, бригадăсемпе звеносене конкретнăй заданисем памалла, юр тытса хăвармалли плана пурнăçа кĕртмелле.

Килес çуркунне акмалли вăрлăхсене хатĕрлесе хурас тĕлĕшпе кăçалхи йăнăшсене урăх тăвас мар тесе, Совнарком райсовет исполкомĕсене çакăн пек ĕçсем тума хушнă: вăрлăх участокĕсенчен вырса илнĕ тырра çапнине, ăна вăрлăх фончĕсене хывнине, вăрлăха тасатнине тата мĕнле сыхласа усранине кашни колхозрах тĕрĕслесе тухмалла; акма юрăхлă мĕнпур вăрлăха кашни колхозрах тата кашни культура тăрăх декабрĕн 1-мĕшĕччен шута илсе хумалла, уйрăм колхозсенче хăшпĕр культурăсен вăрлăхĕ çитменни палăрсассăн, колхозсен çав çитмен вăрлăхсене улăштарса илмелле, çак ĕçе январĕн 1-мĕшĕччен туса ирттермелле; вăрлăха январĕн 1-мĕшĕччен пĕтĕмпех сортласа хумалла, çакна тумашкăн вăрлăх тасатакан обозсем организацилемелле, триерсемпе икĕ смена хушши усă курмалла тата вăрлăх тасатмалли ытти машинăсемпе те, аласемпе те анлăн усă курмалла; вăрлăхсен шăтас пахалăхне контрольно-семенной лабораторисенче тĕрĕслемелле, пĕрремĕш хут тĕрĕслес ĕçе январĕн 1-мĕшĕччен ирттермелле.

Авăн çапса пĕтермелли çирĕмкунлăх

Государствăна тырă парас ĕçе тĕпренех вăйлатас пулать

Сĕнтĕрвăрри районĕ ноябрĕн 23-мĕшĕнче хатĕрлев пунктне мĕнпурĕ те 782 килограмм çеç тырă леçсе панă. Ку вăл виçĕ колхозран. Районри ытти колхозсем тырă пачах та паман.

— Ноябрĕн 30-мĕшчен район государствăна тырă парса татать,—теççĕ районри хатĕрлев организацинче. Анчах ку мухтанчăклă сăмах çеç. Ĕçĕ курăнмасть. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи хатĕрлев организацийĕ хăйĕн ĕçне ниепле те кирлĕ пек йĕркелесе пыраймасть; агентсен ĕçне тĕрĕслесе тăмасть, колхозсенче тырă турттарас ĕçе йĕркелес, организацилес енĕпе кирлĕ пек ĕçлемест. Çавăнтан, килет те ĕнтĕ район государствăна тырă парас енĕпе япăх ĕçлени. Иртнĕ пилĕк кунра районри колхозсем пурĕ те 8 тонна çеç тырă леçсе панă. Паллах, тырра хальхи пек, килограммсемпе турттарса тăрсан, Сĕнтĕрвăрри районĕ государствăна тырă парса татас ĕçе январь уйăхĕччен те те вĕçлеймест. Сидоров (Райуполнаркомзаг), Вахнин (ВКП(б) райкомĕ) юлташсен государствăна тырă парас ĕçре халех татăклă улшăну тумалла.

Ишлей районĕнчи колхозсен государствăна тата 1.207 тонна тырă памалла. Иртнĕ пилĕк кун хушшинче хатĕрлев пунктне районри колхозсем пурĕ те 134 центнер çеç тырă леçсе панă. Ку ĕçе районри 60 колхоз çеç хутшăннă, пилĕк кунхи графика районри пĕр колхоз та пурнăçа кĕртмен.

— Колхозсенче çапнă тырă çук, пурри те чĕрĕ, çавăнпа тырă турттарас ĕç районра чакрĕ-ха,—тет Ишлей районĕнчи уполнаркомзаг Г. Остров юлташ.

Ку ĕнтĕ — сăлтавсене шыраса ĕççĕрларма вĕреннĕ çынăн сăмахĕ. Ку çеç те мар, Остров юлташ ĕç япăх пынине çакăн пек кăтартса парса хăйĕн ĕçри ответсăрлăхне колхозниксем çине йăпĕнтерет.

Государствăна тырă парас ĕçе ниепле сăлтавсем те чарса тăма пултараймаççĕ. Вăл—государствăллă ĕç, колхозсен государство умĕнчи чи малтанхи тивĕçĕ. Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене хирĕç ăнăçлă наступлени туса пыни çине республикăри колхозсен государствăна тырă парас ĕçе нумай хут вăйлатнипе ответлемелле.

Дисциплинăпа йĕркелĕх кирлĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Район, юлса пыракан 10—15 колхозра ĕç йĕркине халех лайăхлатмасан, декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерейместь. Çакă вăл уççăнах курăнать. Сурăмхĕрри Карайри «Большевик» колхоз (председателĕ Степанов юлташ) уйри çĕмелсене тин çеç турттарса кĕртрĕ, авăн çапма пуçланă кăна. Колхозăн татах 165 гектар çинчи тырпула çапмалла.

Апла пулсан та «Большевик» колховăн председателĕ Степанов юлташ авăн çапас ĕçе йĕркелеме тăрăшмасть. Итем çинче ултă лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилка ларать. Унпала сахалтан та кунне 5 гектар тыррине çапма пулать. Анчах ĕçе йĕркелемен. Ĕç дисциплини чăх, нумай колхозниксем ĕçе пачах тухмаççĕ. Молотилка пушăлла нумай тăрать. 47 колхозник талăкра ку молотилкăпа икĕ гектар çурă çинчи тырра çеç çапаççĕ. Колхоз государствăна 418 центнер тырă пама тивĕçлĕ пулсан, паянхи куна 38 центнер çеç панă.

«Пахарь», «Новый мир», Кушар ялсоветĕнчи Буденный ячĕпе тăракан, Красноармейски ялсоветĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозсем те питĕ начар ĕçлеççĕ. Ку колхозсем тырпулсен 40—50 процентне çеç çапса пухнă; авăн çапас ĕçе ирхине 9—10 сехетре çеç тытăнаççĕ те каçхине 4—5 сехетрех пăрахаççĕ. Нумай колхозсем вăрлăхлăх клевера, купăстана, сĕс-хантăра, арпа-пучаха пуçтарса кĕртмен.

Çирĕмкунлăхра кашни колхозăн 1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлемелле; авăн çапса пĕтермелле, государствăна тырă парса татмалла. Çакă вăл ответлă задача, ăна вăхăтра пурнăçламалла. Пĕтĕм вăя юлса пыракан колхозсен ĕçне лайăхлатнă çĕре хумалла.

С. ШАДИН.

Çĕршыв умĕнчи тивĕçе туйса

КАНАШ, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Токарев юлташ ертсе пыракан цехри рабочисемпе работницăсем, фронт заказĕсене вăхăтра тата лайăх пурнăçлас тесе, ĕç вăхăчĕ пĕтнĕ хыççăн татах та юлса ĕçлеççĕ, хăйсен çĕршыв умĕнчи тивĕçне кăтартуллăн пурнăçланин тĕслĕхне кăтартаççĕ. Уйрăм смենăсен коллективĕсем, производствăри дисциплинăна çирĕп тытса пырса, графика кунран кун ирттерсе тултараççĕ. Князев юлташăн смени, сăмахран, хăйĕн кулленхи графикне ноябрĕн 18-мĕшĕнче 130 процент, 19-мĕшĕнче 165 процент тултарчĕ. Огаренко юлташăн смени те талăкри графикпа палăртнинчен 1,5 хут тухăçлăрах ĕçлет.

Талăкри графика пурнăçлас тĕлĕшпе Токарев цехĕнче Скрыпник, Черный, Павловский тата Кисляков стахановецсем малта пыраççĕ. Вĕсем хăйсен сменăри нормисене вăтамран 3 хут ирттерсе тултараççĕ.

Çавăн пекех тимĕрçĕ цехĕнчи чылай бригадăсем те пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Сăмахран, ноябрĕн 20-мĕшĕнчи задание Галкин юлташăн бригади 5 хут, Семеновăн — 4 хут, Мироновăн — 3 хут ирттерсе тултарнă.

Асăннă сменăсен, бригадăсен тата уйрăм стахановецсен ĕç тухăçлăхне вĕсем дисциплинăллă пулни тата çĕршыв умĕнчи парăма ăнланса ĕçлени татса парать.

Г. СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарĕ.

МОПР ячейки организацилерĕç

Çак кунсенче Калинински районри Мăн Явăшри комсомолăн пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Н. Кошкин юлташ) тăрăшнипе МОПР ячейки организацилерĕç. Унта 60 çын ытла члена кĕчĕ.

И. ФЕДИНИН.

Танксен колоннисене тума укçа-тенкĕ пухас ĕç республикăра мĕнле пырать

Республикăра Елчĕк МТС-ĕн трактористсемпе комбайнерсем пуçарнипе танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тата Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн членĕсем пуçарнипе танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укçа пухас ĕç пуçланчĕ. Ĕççыннисен патриотизмне уçăмлăн палăртакан çак питех те пысăк ĕçе Чкаловски, Шăхасан, Улатăр, Сĕнтĕр, Вăрмар районĕсенче лайăх организацилерĕç. Чкаловски районра танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума ноябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне 372.000 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тума 71.000 тенкĕ пухнă.

Ноябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне республикипе пурĕ танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 3.000.000 тенке яхăн пухнă, вăл шутран 2.672.000 тенкине банка хывнă, танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тума 901.000 тенкĕ хывнă.

Анчах Элĕк, Первомайск, Çĕрпӳ, Ишлей, Кувакино, Октябрьски тата Калинино районĕсем çак ĕçе тивĕçлипе организацилеймерĕç. Унти ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем ку ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ларнă. Элĕк районĕнче танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума пурĕ те 13.000 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тума 27.000 тенкĕ пухнă. Çавăн пекех Первомайски районра танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 16.000 тенкĕ, «Тракторист Чувашии» колоннăна тума 10.000 тенкĕ пухнипех лăпланнă.

Юлашки кунсенче пирĕн войскăсем Сталинград хули районĕнче наступленине куçрĕç. Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, пирĕн республикăри ĕççыннисем фронта пулăшас ĕçе вăйлатаççĕ. Танксен колоннисене тума укçа пухас ĕçе кашни колхозникпа колхозницăна хутшăнтарассишĕн кĕрешсе, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен район совечĕсен ку ĕçе куллен оперативно ертсе пымалла.

АГИТКОЛЛЕКТИВСЕМ ЛАЙĂХ ĔÇЛЕÇÇĔ

КАЛИНИНО. Хăмăшри тата Уйкасри вулав çуртĕсенчи агитколлективсем ĕççыннисене Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарни çинчен тунă доклачĕпе приказне ăнлантарса парас тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Хăмăшри вулав çуртĕнче çак ĕçе учительсене, комсомолецсене тата колхозри стахановецсене явăçтарнă. Учительница О. Ананьева юлташ час-часах колхозниксем ĕçленĕ çĕрте пулать, вĕсене хаçатсем вуласа парать, тĕнчери лару-тăрупа паллаштарать. Çак кунсенче вăл пирĕн войскăсем Владикавказ районĕнче нимĕç войскисене вăйлăн пырса çапни çинчен пĕлтернине вуласа пачĕ, Сталин юлташăн доклачĕпе приказне тĕплĕн ăнлантарчĕ.

Уйкасри вулав çуртĕн заведующийĕ Федотова юлташ Сталин юлташăн историллĕ докладне ăнлантарса парса, колхозниксене ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра пурнăçлама мобилизацилет. Вăл юлашки вăхăтра виçĕ колхозра «Девушки в отечественной войне» ятлă темăпа каласусем туса ирттерчĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Ют çĕршывсенче

Гарриман Нью-Йоркра тухса калани

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС): Ноябрĕн 19-мĕшĕнче Нью-Йоркра сăмахпа тухса, Гарриман çапла каланă: «Август уйăхĕнче Черчилль, вăл хăй президент Рузвельтпа сӳтсе явнă плансем çинчен Сталина пĕлтерес тесе, Мускава кайрĕ. Çав каласусене эпĕ те хутшăнтăм, çавăнпа та сире çав каласусем уçăмлă та тӳрĕ кăмăллă пулни çинчен шантарса калама пултаратăп. Сталинградпа Атăл çинелле тӳрремĕнех наступлени туса пыракан Германи войскисен хăшпĕр пайне Хĕрлĕ Çар умĕнчен сирсе ярас шутпа çийĕнчех наступлени пуçласа яма май çукки пирки Сталин кăмăлсăрланнине çăмăлах ăнланса илме пулать. Сталин çапла каларĕ: Гитлера хăйĕн войскисене Хĕвелтухăç фронтĕнчен илсе кайтарас шутпа эсир наступление ирттерех пуçлассине кĕтнĕччĕ, терĕ. Çапах та Сталин: вырăссем кĕрешӳ тивĕçлĕ паттăрлăхпа тата хаюлăхпа малалла туса пырĕç, тесе уççăн пĕлтерчĕ. Сталинăн çапăçури аслă çулпуçа тивĕçлĕ пахалăхсем пурте пур. Вăл Хĕрлĕ Çарпа вырăс халăхне шанса тăрать, вĕсем те вара хăйсем енчен, иккĕленмелли çук, Сталина шанса тăраççĕ. Гитлера пĕтерсе тăкма май пуррине тата çак тĕллеве пурнăçа кĕртнĕ çĕрте Хĕрлĕ Çар мухтавлă та тĕп вырăн йышăнса тăнине Сталин пĕлет. Гитлера хирĕç пыракан вăрçă Совет Союзĕпе Англирен тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен пĕрле вăй хурса кĕрешме ыйтать. Шăпах çак шухăша тытса пырать те ĕнтĕ Сталин. Вăл хăйĕн войскисене чи лайăх хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллантарассишĕн, чи лайăх снабжени парса тăрассишĕн, кĕрешӳ хатĕрĕсене вырăссен предприятийĕсенчен кăна мар, пирĕн индустриллĕ икĕ аслă çĕршывăн предприятийĕсенчен те парса тăрассишĕн тăрăшать. Сталин пулăшу мар ыйтать. Хĕрлĕ Çар тунă паттăрла ĕçсем тата вăл пĕтерсе тăкнă нимĕçсен хисепĕ вырăссене пирĕн енчен пулăшу илсе тăма право парать тесе шутлать Сталин. Америкăпа Англи халăхĕсем çакна ăнланаççĕ: пирĕн пĕрлĕхлĕ ĕçшĕн вырăссем паттăррăн кĕрешнипе хамăр тĕлĕнсе савăнни çинчен эпир вырăссене нихçан та кирлĕ таран каласа пама пултараймăпăр. Çакна ăна никам та ман пек таранăн туйса тăмасть. Эпĕ хамăрăн ресурссен виçине тата хамăрăн транспорт тĕлĕшĕнчи йывăрлăхсене пĕлетĕп. Эпĕ çакна, халиччен мĕн тунине, Рузвельтпа Черчилль мĕн чухлĕ вăй хунине, хамăрăн хĕçпăшаллă вăйсене мĕн кирлине пурне те парса тăрас тĕлĕшпе халиччен мĕнле жертвăсем тӳссе ирттернине пĕлсе тăрса, Америка материалĕсене ытти çĕршывсене турттаракан пирĕн мӳряксем мĕнле паттăрлăх кăтартнине пĕлсе тăрса, çапла калатăп. Англири запассенчен йăнĕ продовольствие вырăс халăхне ярса тăратпăр. Тинĕс урлă çӳремелли тивĕçлĕ майсене пурне те туса алла илсен, эпир Российăна мĕн кирлине пурне те парса тăрас тĕлĕшпе йăлтах тăвăпăр. Материалсене Российăна турттарас ĕçри йывăрлăхсем питех те пысăк. Çурçĕр Российăн çыранĕсем патнелле каякан караварсен тинĕс çинче тăшманпа тĕл пулса чăн-чăн çапăçусем туса ирттерме лекет. Анчах нимĕнле йывăрлăхсем те, нихçан та Америкăн, Англин тата Норвегин суднисен хăрушă рейсĕсене пăрахтараймĕç. Хăюллă çынсем нумайăшĕсем Арктика пăрĕсем хушшинче хăйсен вилĕмĕсене тупрĕç. Çапах та Российăна материалсем тăратассине пирĕн татах та ытларах ӳстермелле. Нумайĕшĕсем халĕ çул çинче, материалсене эпир ытларах та ытларах ярса тăрăпăр.

Эпĕ аслă шанчăкпа çакна калама пултаратăп: вырăссен фронтĕнче юлашки тупăран юлашки хут персе ярсан, çĕнтерĕве алла илсен, — çав çĕнтерӳшĕн эпир вырăссен çĕрĕ çинчен юлашки нимĕçе хăваласа кăлариччен вырăссемпе пĕрле тăрса кĕрешнĕ, — вырăс халăхĕ эпир ăна чи йывăр вăхăтсенче пăрахманнине яланах асра хăварĕ.

Сталин çакна çирĕппĕн шанса тăрать: вăрçă пĕтнĕ хыççăн тĕплĕн çĕнетсе йĕркеленĕ тĕнчере Совет Союзĕпе Пĕрлешӳллĕ Штатсем тата Англи хушшинчи туслă çыхăнусем татах та ытларах сарăлĕç. Хăйĕн юлашки вăхăтри сăмахĕнче Сталин çапла каларĕ: «Англипе Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕн программи: уйрăм расăсем пуçпулса тăрассине пĕтересси; нацисен пĕр танлăхĕшĕн тата вĕсен территорийĕсене никам пырса тĕкĕнмелле марришĕн тăрасси; чуралăха кĕрсе ӳкнĕ нацисене ирĕке кăларасси тата вĕсен тивĕçлĕ прависене ура çине тăратасси; кашни нацие хăйсем кăмăлланă пек йĕрке туса пурăнма право парасси; хĕнхур тӳснĕ нацисене экономика тĕлĕшĕнчен пулăшасси тата вĕсене материальнăй ырлăх тăвас тĕлĕшпе пулăшасси; демократиллĕ ирĕклĕхсене ура çине тăратасси; гитлерла режима пĕтерсе тăкасси пулса тăрать» терĕ. Эпир çак программăпа пĕр иккĕленмесĕрех килĕшме пултаратпăр. Çакă вăл пирĕн хамăрăн программа пулса тăрать».

Юлашкинчен Гарриман çапла каланă: «Юлашки вăхăтра чаплă çитĕнӳсем тунă пулин те, малашне татах та нумай вăхăт хушши йывăр кĕрешӳ туса пымалла пулать-ха», тенĕ.

Эттли заявленийĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи премьер-министрĕн заместителĕ Эттли Ридингра сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче çапла пĕлтернĕ: «Вăтаçĕр тинĕсре эпир хăрушсăрлăх кăна мар туса хутăмăр, эпĕ кунпа пĕрлех çакна шанса тăратăп: эпир татах та малалла кайăпăр, Вăтаçĕр тинĕсрен пысăк наступлени пуçласа ямалли трамплин туса хурăпăр».

Германи авиацийĕн Англи çинчи операцийĕсем йăвашланни

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: тăшманăн авиацийĕ икĕ эрне хушши ĕнтĕ Англи утравĕсем çийĕнче хăйĕн активлăхне кăтартаймасть.

Противник хăйĕн бомбардировщикĕсене союзниксем Европăна тапăнса кĕрессинчен хӳтĕленмешкĕн упраса тăнине тата вăл хăйĕн авиацине Вăтаçĕр тинĕсĕн кăнтăрти пайĕнче сывлăшри хаяр çапăçусем валли пухса тăратма шутланине пур паллăсем те кăтартса
параççĕ.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ноябрĕн 21-мĕшĕнче Британи войскисен малти чăсĕсенчен пĕри Тунисра нимĕçсен бронетанковăй колоннине йывăр çухатусем тӳстерне. Противник французсен пĕр чăсне, союзниксем енне куçнăскерне, атакăланă. Анчах та тăшманăн хаяр атакисем французсен хирĕç тăрас хăватне хавшатма пултарайман. Французсен патрулĕсем противникăн малти позицийĕсен тылĕнче шалта кĕрешеççĕ.

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Мароккăри радио пĕлтернĕ тăрăх, Габесран çурçĕр-хĕвеланăç еннелле каякан чугунçул линине халĕ союзниксен войскисем контрольлесе тăраççĕ. Англипе Америка чăсĕсем çавăн пекех тата Кайруанпа Сусра та çирĕпленсе ларнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Санди таймс» хаçат Франци адмиралĕпе Мюзельепе Бизертăн пĕлтерĕшĕ пирки калаçнине пичетлесе кăларнă. Мюзелье каланă тăрăх, Бизертăра çыран хĕрринчи оборонăн 35 километра персе кен орудийĕсем вырнаçса тăраççĕ. Тĕнĕл держависен войскисем Бизертăра çирĕпленсе ларма пултарас пулсан, вĕсене мĕнпур оборонăллă сооруженисене тытса тăма 30 пин çын кирлĕ пулнă пулĕччĕ. Портри доксенче тĕнчери чи пысăк линкорсем вырнаçма пултараççĕ. Чул ту ăшне 25 метр таранăш чавса çĕрайĕнче складсем тунă, вĕсенче снаряженисемпе боеприпассем 20 пин тонна вырнаçма пултараççĕ.

ЛИВИРЕ АНГЛИ ВОЙСКИСЕМ МАЛАЛЛА ÇЕНТЕРСЕ ПЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер кăнтăрла Британи войскисем Аджедаби патĕнче татах малалла куçнă. Тăшманăн каялла чакма лекнĕ. Бомбардировка тăвакан авиаци Сицилири виçĕ аэродрома ăнăçлăн пыра-пыра тапăннă.

ЯПОНИПЕ США ÇУХАТĂВĔСЕМ ÇИНЧЕН АМЕРИКА ПĔЛТЕРНИ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Лăпкă океанра вăрçă пуçланнăранпа (1941 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа) Япони флочĕн мĕнпурĕ 243 карап пĕтнĕ, çав шутра 2 линкор, 6 авианосец, 21 крейсер, 39 эсминец, 7 подводнăй лодка, 51 транспорт пĕтнĕ. Çав вăхăт хушшинче Пĕрлешӳллĕ Штатсен 60 карап пĕтнĕ, вăл шутра пĕр линкор, 4 авианосец, 6 крейсер, 21 эсминец, 4 подводнăй лодка, тата 4 транспорт пĕтнĕ.

—⊙—

Пĕлтерӳ

Кăçалхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, парткабинетăн лекцисем ирттермелли залĕнче (Чувашская, 6) пропагандистсемпе агитаторсем валли Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарни çинчен тунă доклачĕн иккĕмĕш сыпăкĕ тăрăх:

«Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри вăрçă ĕçĕсем» темăпа лекци пулать.

Лекторĕ — **И. И. ШАПИРО** юлташ.

ВКП(б) Шупашкар хула Комитечĕн парткабинечĕ.

Н. Мранька

Амăшĕ ылханни

Пĕр актлă пьеса

ВЫЛЯКАНСЕМ:

ХРЕСТИНЕ.
ГЕНА.
РОЗА.
СЕМУК.
КĔТЕРУК.

Лайăх пурăнакан колхозникăн пӳрчĕ. Хрестине кăмакаран çимĕçсем кăларать. Роза отечественнăй вăрçă геройĕсен портречĕсене Сталин портречĕпе юнашар, малти стена çумне çыпăçтарать. Портретсем тавра чечексем çакса илемлетет. Юрлать.

Стелются черные тучи,
Молнии в небе снуют,
В облаках пыли летучей
Трубы тревогу поют.
С бандой фашистов сразиться
Сталин отважных зовет.
Смелого—пуля боится,
Смелого штык не берет.

ХРЕСТИНЕ. Роза. Роза...

РОЗА. (Юрлама чарăнать). Мĕн, анне?

ХРЕСТИНЕ. Кирлĕ-кирлĕ маррипе аташса вăхăта ан ирттер-ха.

РОЗА. Кирлĕ маррипе?.. Ан тĕлĕнтер анне! Кирлĕ марри пулать-ши çакă? Пăхсам... Капитан Гастелло!.. Паттăр вĕçевçĕ пулнă. Совет Союзĕн Геройĕ. Вăл, хăйĕн вут тивнĕ самолетне фашистсем çине çапăнтарнă. Вĕсене çунтарнă. Акă ку, Зоя Космодемьянская. Паттăр партизанка. Ăна фашистсем тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Зоя паттăр хĕр пулнă... Эсĕ, анне, кирлĕ маррипе тетĕн...

ХРЕСТИНЕ. Вĕсем кирлĕ мар тесе каларăм-и эпĕ сана? Чĕлхе мĕнле çаврăнĕ ун пек калама?

РОЗА. Çавăнпа васкатăп анне. Пичче киличчен геройсен кĕтесĕ çиçсе тăтăр. Пăхтăр та савăнтăр вăл. Пирĕн пичче те вăрçăра пулнă вĕт. Аманнă. Вăл та герой.

ХРЕСТИНЕ. Геройĕ, мĕнĕ... Киле таврăнни паха, хĕрĕм.

РОЗА. Кăна питĕ йăнăш каларăн эсĕ, анне.

ХРЕСТИНЕ. Юрать-çке! Пурне те чухлама ватăлнă ĕнтĕ. Эсир чухлани те паха маншăн. Пыр-ха часрах, нӳхрепрен çу илсе кӳр, кукăльсене сĕрсе çемĕçтерем.

РОЗА. Вырнаçтарса пĕтерме вăхăт пар ĕнтĕ, анне...

ХРЕСТИНЕ. Эккея. Каласанах ĕçе туман йăла, мĕнле йăла вăл?

РОЗА. Каятăп, каятăп! Ан ятлаç анне. Мĕнле савăтпа илсе кĕрес?

ХРЕСТИНЕ. Чӳлмекĕпех йăт та кĕр.

РОЗА. Халех анне! Чӳлмекĕпех илсе кĕретĕп. (Юрласа тухса каять)

Ринулись в высь самолеты,
Двинулся танков строй...

ХРЕСТИНЕ. Эккеях..: Мăнтарăн çамрăкĕсем. Савăнса çеç ӳсмеллеччĕ, вĕт вĕсен...

(Кĕтерук кĕрет).

ХРЕСТИНЕ. Килех, Кĕтерук.

КĔТЕРУК. Аван пурăнатăр-и?

ХРЕСТИНЕ. Майĕпе... Тĕпелерех иртсе лар-ха.

КĔТЕРУК. Ларсах тăрас мар пулĕ. Правленине кайма тесе тухнăччĕ те, çула май кĕрсе тухас терĕм.

ХРЕСТИНЕ. Эпĕ паян уя та тухаймарăм-ха ĕнтĕ. Тем калĕ бригадир? Звеноводне пĕлтернĕччĕ те.

КĔТЕРУК. Мĕн калатăр вара? Халиччен ĕçрен юлса курнă-и эсĕ? Вăрçăра аманнă ывăла кĕтсе илмесен, кама кĕтес?..

ХРЕСТИНЕ. Хам та çавнах шухăшларăм. Çимĕç пекки те хатĕрлесе хывас килчĕ. Сăра та турăм (сĕтел çине хăпарту пырса хывать). Кил, Кĕтерук, ăшă çимĕç патне лар-ха.

КĔТЕРУК. Маншăн ан чăрман. Эпĕ хыпар-хăнар пĕлесшĕнччĕ те... Семука илме кайнă пулĕ?

ХРЕСТИНЕ. Паçăрах кайнă. Халĕ çитет-и, вара çитет-и тесе кĕтетĕп.

КĔТЕРУК. Семукпа хăйĕнпе калаçса пăхас тенĕччĕ! Те пĕтрех ĕнтĕ вăл ман ывăл...

ХРЕСТИНЕ. Вăрçăри япалана ним калама та çук. Тăшманĕ тискер теççĕ. Мĕн чухлĕ çын пуçне çирĕ ĕнтĕ. Мĕн чухлĕ куççулĕ юхтарчĕ.

КĔТЕРУК. Шухăшлатăп, шухăшлатăп та вара, чĕре татăлса анас пекех ыратать.

ХРЕСТИНЕ. Мĕн каласси пур вара... Чипер çуратса ӳстернĕ ывăла çухатасси çăмăл япала-и? Эпĕ те Семука курассăн сунманччĕ. Ăраскал çавăрса килчĕ тата.

КĔТЕРУК. Хăвăрăн телей... Çук, манăн Васлин ăраскалĕ тухмарĕ.

ХРЕСТИНЕ. Çавтерех ан хуйхăр-ха, Кĕтерук. Вилнинех курни çинчен çырманă-çке çакă Семук. Çапăçуран каялла тухнине курмарăм тесе çеç çырнă. Кам пĕлет.

ХРЕСТИНЕ. (Кĕтерука сăра тултарса парать). Сăра ĕç-ха, Кĕтерук.

КĔТЕРУК. Тавсье...

ХРЕСТИНЕ. Тавах та. Курманни нумай пулать.

КĔТЕРУК. Сăри те аван йӳçнĕ... Каяс-ха ĕнтĕ.

ХРЕСТИНЕ. Ма васкатăн çакă?

КĔТЕРУК. Почта килмерĕ-ши, кайса пăхам-ха. Васли çыру ярассăнах туйăнать.

ХРЕСТИНЕ. Семук килсен кĕрсе тух эппин.

КĔТЕРУК. Килетĕп, килетĕп... (Тухса каять).

(Пауза. Унтан Роза юрласа кĕрет. Аллинче чӳлмек).

Смелого—пуля боится.
Смелого—штык не берет.

ХРЕСТИНЕ. (Розăна пӳлсе). Ма васкаса çӳреместĕн эсĕ? Çимĕçсем сивĕнеççĕ вĕт.

РОЗА. Питĕ васкарăм, анне! (Чӳлмеке Хрестинене парать).

ХРЕСТИНЕ. Эккей, санпала?

РОЗА. Мĕн пулнă?

ХРЕСТИНЕ. Ма услам çу илсе кĕтĕн?

РОЗА. Мĕнле çу илсе кĕмеллеччĕ?

ХРЕСТИНЕ. Сар çу илсе кĕр терĕм-çке!

РОЗА. Тĕттĕм унта, анне! Куна та хыпашласа çеç тупрăм.

ХРЕСТИНЕ. Сире шаначчен...

РОЗА Ан ятлаç, анне! Халех тухса илетĕп.

ХРЕСТИНЕ. Хам тухса илетĕп. Эсĕ ху ĕçне часрах туса пĕтер.

РОЗА. Пичче килнĕ çĕре хатĕр пулать, анне!

(Хрестине васкавлăн тухса каять. Роза юрла-юрла портретсене вырнаçтарать, унтан Семукăн портретне тытса, ăна чылайччен пăхса тăрать. Ăлăкран Гена чупса кĕрет).

ГЕНА. Роза, Роза!

РОЗА. Мĕн?

ГЕНА. Килчĕ! Пичче килчĕ!

(Хрестине çу чӳлмекки йăтса кĕрет).

РОЗА. Анне, Семук килчĕ тет. Атя, Гена, хирĕç тухатпăр!

(Генăпа Роза чупса тухса каяççĕ).

ХРЕСТИНЕ. (Васкавлăн пырса чӳрече пăхать). Эккея, килчĕ... Тăрантас çинчен чиперех анчĕ... Тĕрĕсех... Тата мĕн тумаллаччĕ çакă манăн?.. Хатĕр пулас, пурте хатĕр...

(Пӳрте малтан Генăпа Роза чупса кĕреççĕ. Генăн аллинче Семукăн çар кутамкки. Вĕсен хыçĕнчен Семук кĕрет).

СЕМУК. Анне!

ХРЕСТИНЕ. Савнă ывăлăм... (Семука ыталаса чуптăвать). Сывах-и? Мĕнле ăраскал çавăрса килчĕ сана?..

СЕМУК. Амантрĕç те килтĕм, анне.

ХРЕСТИНЕ. Курассăн сунманччĕ.

СЕМУК. Мĕншĕн?

ХРЕСТИНЕ. Авă, Васлипе пĕрле карăр та...

СЕМУК. Васли урăх шут анне. Вăл килте чухне те хăйне никама шутламан пек тыткаларчĕ. Унта вăрçă... Çапăçма пĕлес пулать. Пĕлмесен, вилĕм...

ХРЕСТИНЕ. Унти япала çинчен тем каламалла ачам. Çаплах, амăшĕ килсен ытлашши калаçса ан хурлантар. Хăйĕн куçĕпе курманскер, ĕмĕчĕпе йăпанса пурăнтăр. Хам та çавăн пекех пулăттăм.

СЕМУК. Урăх нимĕн каламалли те çук манăн, анне. Мĕн пĕлни çинчен тахçанах çырса пĕлтернĕ.

ХРЕСТИНЕ. Çавă çырнипех иртсе кайтăр тетĕп çавă... Салтăн-ха ывăлăм. Хывăн. Ывăнтăн та-и тен?..

СЕМУК. Ĕнтĕ килте, анне. Тăван çемье хушшинче хывăнма, канма та ĕлкĕрĕп.

РОЗА. Пичче! Урăх каймастăн-и?

СЕМУК. Пĕлместĕп, Роза.

ГЕНА. Пуçĕллех ячĕç-и, пичче?

СЕМУК. Çук, Гена... Пуçĕллех ямарĕç. Пĕр уйăхлăха çеç ячĕç.

РОЗА. Уйăхран татах каятăн-и?

СЕМУК. Илсен, каяс пулать.

ХРЕСТИНЕ. Уйăха килни те паха. Уйăхран тепĕр сывлăш.

СЕМУК. Урăх сывлăш пуласси çинчен калама хĕн, анне. Ытла та вăйлăн çĕмĕрсе килеççĕ. Атăла тухасси инçе мар.

ХРЕСТИНЕ. Хăрушă...

СЕМУК. Çăмăл япала мар, анне. Анчах ун çинчен кайран калаçăпăр. Темĕн, хырăм выçнă пек манăн. Госпитальре аван пăхатчĕç. Çул çинче касăлтăм...

ХРЕСТИНЕ. Эккея, ват супнă мар-и эпĕ? Килсенех хатĕрлемелле... (Сĕтел çине çимĕçсем пырса хывать). Лар-ха. Эсĕ юратакан аш кукли те туса хатĕрленĕччĕ. Сăра çине пыл ятăм. Колхозăн кăçал пыл нумай пулнă. Валеçрĕç.

ГЕНА. Пичче, ăçтан амантнă сана?

СЕМУК. Хулран амантрĕç, Гена. Пуля хул витĕрех тухса кайнă.

РОЗА. Ыратрĕ пулĕ-çке?

СЕМУК. Ыратнине туятăн-и унта? Темĕн, хулла пĕçернĕ пек пулса кайрĕ. Кайран юн шĕлкесе анчĕ. Эпĕ çаплах малалла пыратăп. Чĕрере пĕр ĕмĕт хамăн, тăшмана çĕнтермелле.

ГЕНА. Вăрçăра хăрушă мар-и, пичче?

СЕМУК. Камшăн мĕнле... Эпĕ хăраса курман. Çăмăр пек пуля çăвать. Снарядсем çурăлни аслати авăтни пек кĕрлетчĕ. Эпĕ малаллах утаттăм.

(Юлашки пулать).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом пе чати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн 3—99 ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11612   Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п